Шупашкар

ЮХМА Мишши сăвви

Анисим АСЛАМАС кĕвви

1. Тӳпере хĕвел йăл кулать,
Ун ытамĕнче ман хула,
Савнă Шупашкарăм,
Эп сана юратрăм,
Пулăн чĕрере
Ĕмĕрех.

Хушса юрламаллш.

Шупашкар, Шупашкар,
Шупашкар!
Пыл шăршиллĕ хитре
çăкасар.
Маншăн эсĕ, чи хаклă
хула,
Шупашкар, Шупашкар.

2. Çут хĕвел çиçет тӳпере,
Сарпике кулли чĕрере.
Юнашар ĕçлетпĕр,
Çĕн завод çĕклетпĕр,
Атăл хĕрринче,
Кур тĕнче.

Хушса юрламаллш.

3. Çăлтăрсем сӳнеç тӳпере,
Юрату сӳнмест чĕрере.
Пирĕн пурнăç çулĕ
Ĕмĕр такăр пулĕ, —
Çирĕп те тату
Юрату.

Хушса юрламаллш.